Вĕçĕн çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
2
ЫТЛАРИКУН
175(6412) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Верховный Главнокомандующин ПРИКАЗĔ

Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

Хĕвеланăç фронтĕнчи çарсем çак кунсенче тăшманăн оборонин вăйлă тĕреклетнĕ участокне татса кĕнĕ те, Смоленск еннелле тапăнса пырса, ĕнер, августăн 30-мĕшĕнче, операцисем енчен питĕ паха пункта, çулсен пысăк узелне, Смоленск енчи оборонăн паха опорнăй пунктне—Ельня хулине йышăнса илнĕ.

Ельня хули патĕнчи çапăçусенче **Бурдейный** генерал-майорăн гвардеец-танкисчĕсем, **Гордов** генерал-лейтенантăн, **Крылов** генерал-майорăн, **Трубников** генерал-лейтенантăн çарĕсем, Авиаци Маршалĕн **Голованован** тата авиаци генерал-лейтенанчĕн **Громован** летчикĕсем уйрăмах палăрнă.

Ельня хули патĕнче пирĕн çарсем тунă çĕнтерĕве палăртас майпа Ельня хули патĕнчи çапăçусенче уйрăмах палăрнă 29-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизине, 76-мĕш стрелковăй дивизие, 25-мĕш Гвардейски танковăй бригадăна, 26-мĕш Гвардейски танковăй бригадăна, 23-мĕш Гвардейски уйрăм танковăй бригадăна тата 119-мĕш уйрăм танковăй полка „Ельнински" тесе ят парас тата малашне вĕсене çапла чĕнмелле тăвас:

29-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Ельнински стрелковăй дивизи;

76-мĕш Ельнински стрелковăй дивизи;

25-мĕш Гвардейски Ельнински танковăй бригада;

26-мĕш Гвардейски Ельнински танковăй бригада;

23-мĕш Гвардейски Ельнински уйрăм танковăй бригада;

119-мĕш Ельнински уйрăм танковăй полк.

Ельня хули патĕнче çĕнтерĕве паттăр боецсене пирĕн столица Мускав хамăр Тăван çĕршыв ячĕпе паян, августăн 31-мĕшĕнче, 19 сехетре, 124 тупăран 12 хут пĕр харăс персе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн тата маневрсем тума пĕлнĕшĕн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, Смоленск енчи операцисенче пулнăскерсене, тав тăватăп. Ак çаксем пĕлсе кĕрешнине уйрăмах паллă тăватăп:

Стученко генерал-майорăн 29-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Ельнински стрелковăй дивизийĕ,

Бабаян полковникăн 26-мĕш стрелковăй Ельнински дивизийĕ,

Шевченко полковникăн 25-мĕш Гвардейски Ельнински танковăй бригади,

Нестеров полковникăн 26-мĕш Гвардейски Ельнински танковăй бригади,

Калинин полковникăн 23-мĕш Гвардейски Ельнински уйрăм танковăй бригади,

Лосик подполковникăн 119-мĕш Ельнински уйрăм танковăй полкĕ,

Ласкин полковникăн 63-мĕш стрелковăй дивизийĕ.

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи августăн 31-мĕшĕ.

Верховный Главнокомандующин ПРИКАЗĔ

Арми генералне РОКОССОВСКИЕ

Центральнăй фронтри çарсем, тăшманăн Севск районĕнчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ участокне татса кĕрсе тата вирлĕн малалла тапăнса пырса, августăн 30-мĕшĕнче **Глухов** тата **Рыльск** хулисене йышăнса илнĕ, Çурçĕр Украинăна кĕрсе кайнă.

Севск, Глухов тата Рыльск хулисене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕн **Корчагинăн** гвардеец-танкисчĕсем, **Рудченко** генерал-майорăн танкисчĕсем, **Черняховский** генерал-лейтенантăн тата **Батов** генерал-лейтенантăн çарĕсем, танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕн **Богдановăн** танкисчĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн **Руденкон** летчикĕсем уйрăмах палăрнă.

Çĕнтерусем тунине палăртас майпа Глухов, Рыльск тата Севск хулисем патĕнчи çапăçусенче уйрăмах палăрнă дивизисене, танковăй тата артиллери соединенийĕсене çакăн пек ят парас:

„Глуховски" ят:

70-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Гвардейски стрелковăй дивизие;

226-мĕш стрелковăй дивизие;

23-мĕш танковăй бригадăна;

1-мĕш Гвардейски артиллери дивизине;

„Рыльски" ят:

121-мĕш стрелковăй дивизие;

112-мĕш стрелковăй дивизие;

„Севски" ят:

69-мĕш Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизие;

60-мĕш стрелковăй дивизие;

103-мĕш танковăй бригадăна;

43-мĕш механизированнăй бригадăна;

255-мĕш уйрăм танковăй полка;

68-мĕш тупăллă артиллери бригадине;

100-мĕш Хĕрлĕ ялавлă хăватлă артиллери бригадине.

Малашне çав соединенисене çакăн пек чĕнмелле тăвас:

70-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Глуховски стрелковăй дивизи,

226-мĕш Глуховски стрелковăй дивизи,

23-мĕш Глуховски танковăй бригада,

1-мĕш Гвардейски Глуховски артиллери дивизийĕ,

121-мĕш Рыльски стрелковăй дивизи,

112-мĕш Рыльски стрелковăй дивизи,

69-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Севски стрелковăй дивизи,

60-мĕш Севски стрелковăй дивизи,

103-мĕш Севски танковăй бригада,

43-мĕш Севски механизированнăй бригада,

255-мĕш Севски уйрăм танковăй полк,

68-мĕш Севски тупăллă артиллери бригади,

100-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Севски хăватлă артиллери бригади.

Глухов, Рыльск тата Севск хулисене ирĕке кăларнă паттăр çарсене пирĕн столица Мускав хамăр Тăван çĕршыв ячĕпе паян, августăн 31-мĕшĕнче, 20 сехет те 30 минутăра, 124 тупăран 12 хут пĕр харăс персе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн тата маневрсем тума пĕлнĕшĕн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, Севск, Глухов тата Рыльск хулисем патĕнчи çапăçусенче пулнисене, тав тăватăп, чи малтан çаксене тав тăватăп:

Гусев полковникăн 70-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Глуховски стрелковăй дивизине,

Петренко полковникăн 226-мĕш Глуховски стрелковăй дивизине,

Артиллери генерал-майорĕн **Годинăн** 1-мĕш Гвардейски Глуховски артиллери дивизине,

Демидов полковникăн 23-мĕш Глуховски танковăй бригадине,

Ладыгин генерал-майорăн 121-мĕш Рыльски стрелковăй дивизине,

Гладков полковникăн 112-мĕш Рыльски стрелковăй дивизине,

Кузовков полковникăн 69-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Севски стрелковăй дивизине,

Богоявленский полковникăн 60-мĕш Севски стрелковăй дивизине,

Халзев подполковникăн 103-мĕш Севски танковăй бригадине,

Баринов генерал-майорăн 43-мĕш Севски механизированнăй бригадине,

Мухин подполковникăн 255-мĕш Севски уйрăм танковăй полкне,

Васильев полковникăн 68-мĕш Севски тупăллă артиллери бригадине,

Кузнецов полковникăн 100-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Севски хăватлă артиллери бригадине,

Онуприенко генерал-майорăн 6-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизине,

Ласченко полковникăн 322-мĕш стрелковăй дивизине,

Угрюмов подполковникăн 150-мĕш стрелковăй танковăй бригадине,

Пегов полковникăн 1178-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкне тата авиаци генерал-майорĕн **Денисовăн**, авиаци генерал-майорĕн **Антошинăн**, авиаци генерал-майорĕн **Каравецкин**, **Комаров** полковникăн тата **Бугелев** полковникăн авиасоединенийĕсен летчикĕсене.

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи августăн 31-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 31-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂРАН

Çак кунсенче пирĕн Хĕвеланăç фронтĕнчи çарсем СМОЛЕНСК енче наступлени пуçласа янă. Тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ оборонине фронт тăршшĕпе 50 километр ытла татса кĕнĕ, 15 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçнă. Ĕнер, августăн 30-мĕшĕнче, пирĕн çарсем Смоленск енчи оборонăн питĕ кирлĕ тĕреклетнĕ пунктне — ЕЛЬНЯ хулине йышăнса илнĕ. 4 кун хушши пынă çапăçусенче пирĕн çарсем халăх пурăнакан 170 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра ТЕРЕНИНО, КОРОБЕЦ, ЖЕГЛОВКА, КАЛОШИНО, ДОРОГОБУЖ (çурçĕрти) чугун çул станцийĕсене, БЕЛЫЙ ХОЛМ, МИТИШКИНО, ЮШКОВО, БЫВАЛКИ, ИЛОВЕЦ, ЖАБЬЕ, КАМЕНЕЦ, КОШЕЛЕВО, ВАРАКСИНА, ПОРУБАНЬ, УВАРОВА ятлă çирĕплетнĕ пунктсене тата САФОНОВО район центрне илнĕ.

Çак кунсенче пирĕн Центральнăй фронтри çарсем те тăшманăн СЕВСК районĕнчи вăйлă çирĕплетнĕ оборона тăрăхне фронт тăршшĕпе 100 километр татса кĕнĕ те, вирлĕн малалла тапăнса пырса, 60 километр таран малалла куçнă. Çурçĕр Украина территорине кĕрсе кайнă. Ĕнер пирĕн çарсем ГЛУХОВ тата РЫЛЬСК хулисене йышăнса илнĕ, 5 кун хушши пынă çапăçусенче пирĕн çарсем халăх пурăнакан 200 пункта ытла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Вăл шутра Сумы облаçĕнчи ЧЕРВОННОЕ район центрне, Курск облаçĕнчи КРУПЕЦ район центрне, ХОЛМОВКА, ЭСМАНЬ, КЛЕВЕНЬ чугун çул станцийĕсене илнĕ.

Кăнтăр фронтĕнчи çарсем ТАГАНРОГ районĕнче çавăрса илнĕ тăшман чаçĕсене пĕтерсе пыраççĕ.

Пирĕн ХАРЬКОВРАН хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре малалла тапăнса пыракан çарсем татах малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Августăн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 96 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 44 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Çак кунсенче пирĕн хĕвеланăç фронтĕнчи çарсем наступлени пуçласа янă. Хаяр çапăçусенче тăшман оборонине фронт тăршшĕпе 50 километр ытла татса кĕнĕ. Малалла тапăнса пырса, пирĕн çарсем нимĕçсен Угра шывĕ çинчи çирĕплетнĕ рубежĕ патне пырса çитнĕ. Татăклăн пырса çапса, пирĕн пехота, танковăй тата артиллери чаçĕсем нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Смоленск енчи оборонăн питĕ кирлĕ тĕреклетнĕ пунктне—Ельня хулине йышăнса илнĕ. Темиçе кун хушши пынă çапăçусенче пирĕн çарсем халăх пурăнакан 170 пункта ытла нимĕç эккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă. Тăшмана питĕ пысăк çухатусем кӳнĕ. Паянхи çапăçусенче кăна нимĕçсен 5.000 салтакĕпе офицерĕнчен кая мар вĕлерсе пĕтернĕ, 56 танк, 60 тупă тата 200 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пыраççĕ.

Пирĕн авиаци çĕр çинчи çарсене наступлени тума активлăн пулăшать. Совет летчикĕсем паянхи сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 37 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Пирĕн Центральнăй фронтри çарсем тăшманăн Севск районĕнчи вăйлăн çирĕплетнĕ оборонине татса кĕнĕ те ăнăçлăн малалла тапăнса пынă. Ĕнер пирĕн çарсем Глухов тата Рыльск хулисене йышăнса илнĕ, Çурçĕр Украина территорине кĕрсе кайнă. 5 кун хушшинчи çапăçусенче Сумы тата Курск облаçĕсенчи халăх пурăнакан 200 пункта ытла йышăнса илнĕ. Совет çарĕсем пыра-пыра çаппипе каялла чакакан тăшман пысăк çухатусем тӳсет. Севск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем çеç кун каçиччен нимĕçсен 3.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 28 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 7 туппине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Нимĕçсенчен юсавлă 8 танк, 26 хир туппи, хăй тĕллĕн çӳрекен 4 тупă, çавăн пекех тата боеприпассемпе çар пурлăхĕ хунă темиçе склад тытса илнĕ. Нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче пирĕн çарсем тăшманăн Таганрог патĕнче аркатса тăкнă группировкин юлашкийĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Пĕр соединени боецĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕç пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсем хушшинче тупăсемпе автомашинăсем нумай. Тепĕр участокра пирĕн утлă çар нимĕçсен çавăрса илнĕ ункăран тухса тарма хăтланнă пехотипе автомашинисен пысăк колоннине питех те хăвăрттăн атакăланă. Çав çапăçура гитлеровецсен пысăк пайне пĕтерсе тăкнă, ыттисене тыткăна илнĕ. Тăшманăн çар пурлăхĕ турттарса пынă автомашинисене пирĕн подразделенисем тытса илнĕ.

Азов тинĕсĕнче пирĕн катерсем тăшманăн хăй тĕллĕн çӳрекен икĕ баржипе пĕр катерне шыва путарнă, пĕр тральщикĕпе тепĕр катерне экипажĕсемпе пĕрлех тытса илнĕ.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн пĕр соединени чаçĕсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 7 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 2 туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ.

Харьковран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, малтанах хатĕрлесе хунă оборона рубежĕ пулăшнипе, тăшман пирĕн малалла тапăнса пыракан çарсене хаяррăн хирĕç тăрать. Пĕр чаçри боецсем кăнтăрлаччен тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă. Тăшмана халран ярсан, пирĕн боецсем нимĕçсене пырса çапнă та каялла ывăтса янă. Вара, малалла куçса, халăх пурăнакан 6 пункта йышăнса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче 600 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. 2 бронемашина, 8 тупă, 39 пулемет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсем персе тăшманăн 8 туппине тата минометсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă, 42 дзота тата 5 наблюдательнăй пункта ишсе антарнă.

Пирĕн авиаци пăрахнă бомбăсем тӳрремĕнех пырса тивнипе тăшманăн çар эшелонĕ тата боеприпассен склачĕ сирпĕнсе кайнă.

* * *

Киев облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр район центрĕнче вырнаçса тăнă нимĕç гарнизонне сасартăк пырса тапăннă. Кĕскен пулса иртнĕ хаяр çапăçура тăшмана аркатса тăкнă, нимĕç салтакĕсенчен сахалăшĕ кăна тăрса юлнă, вара вĕсем сапаланса тарса пĕтнĕ. Партизансем 14 автомашина, 30 тягач пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн горючи складне çунтарса янă.

Çулталăкри плана ирттерсе тултартăмăр

— Хăватлăн наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çара тухăçлă ĕçленипе пулăшса пырар,—теççĕ пирĕн «Стрела» промартель членĕсем. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Эпир ăмăрту договорĕсене мĕнле пурнăçа кĕртнине тăтăшах тĕрĕслесе, малта пыракансен опытне сарса пыратпăр, кая юлакансене пулăшатпăр. Çавăнпа нормăна тултарман алăстаçсен хисепĕ чаксах пырать. Уйрăмăнах В. Архипова, М. Алексеева, Ф. Сергеева, О. Емельянова юлташсем пысăк ӳсĕмсем турĕç. Вĕсем куллен виçĕ норма таран тăваççĕ.

Артель коллективĕ çулталăкри плана срокчен ирттерсе тултарчĕ, ăна вăл 265 процент тултарчĕ. Куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе тата пысăкрах ӳсĕмсем турăмăр, çулталăкри плана 417 процент тултартăмăр.

Анчах эпир плана тултарнă тесе лăпланса лармастпăр. Ĕççыннисем валли таварсем кăларассине ӳстерсех пырассишĕн кĕрешетпĕр.

Г. ЕРИСОВ,
Красноармейски районри «Стрела» промартель председателĕ.

Тырă вырса пĕтернĕ

ШАМАРША, сентябрĕн 1-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Шăмăршă районĕ августăн 31-мĕшĕ тĕлне тырăсене пĕтĕмĕшпех вырса пĕтерчĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ ВИСЛОБОКОВ.

Комбайнпа тырă вырмалли плана тултарнă

КУСЛАВККА, сентябрĕн 1-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Куславкка МТС-ĕ комбайнпа тырă вырмалли плана августăн 30-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Планра кăтартнă 1500 гектар вырăнне 1517 гектар тырă вырчĕ, 289 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ.

Ильин, Скворцов, Баганов, Антонов комбайнерсем планра кăтартнă 110 гектар вырăнне 170—180-шар гектар тырă вырса пуçтарчĕç.

ЛАВРЕНТЬЕВ,
МТС директорĕ.

Ĕçри хастарлăх татах та ӳсрĕ

СĔНТĔР. Ильинкăри «Волга» промартель ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем туса кăларас плана çулсерен ирттерсе тултарать. Кăçал малтанхи çурçул хушшинче артель 196.400 тенкĕлĕх, июль уйăхĕнче 19.200 тенкĕлĕх тавар туса кăларнă. Тимĕрç тата атă-пушмак цехĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Тимĕрç цехĕ июль уйăхĕнче планран ирттерсе 4.517 тенкĕлĕх тавар кăларнă.

Юлашки кунсенче артель членĕсене Сталин юлташăн приказĕсене ăнлантарса панă май, ĕç тухăçлăхĕ татах та ӳсрĕ. Халĕ Н. Пигалев, М. Волков, И. Кожемиров стахановецсем нормăна 200—250 процент тултарса ĕçлеççĕ. Çавăн пекех сăра тăвакан цех та плана ирттерсе тултарать. Кунта Яков Овчинников артеле организациленĕренпех мастер пулса ĕçлет, нормăна 200 процент тултарса пырать. Халĕ Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ приказĕсене итленĕ хыççăн вăл виçĕ норма пама пулчĕ.

Артель коллективĕ çулталăкри плана декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма, планран ирттерсе 8.000 тенкĕлĕх тупăш илме сăмах пачĕ.

М. Карпов.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Сталин юлташăн кĕнекине вĕренни колхозри ĕçсене лайăхрах йĕркелеме пулăшать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. («Чăваш коммуни» корр.). Янгелдăри коммунистсем тата ялсовет активĕ «Совет Союзĕн отечественнăй Аслă вăрçи çинчен» Сталин юлташ çырнă кĕнекене кружокра вĕренеççĕ. Унта вĕренекенсене пулăшма парторганизаци виçĕ хутчен семинар иртерчĕ. Пĕрремĕш занятире Сталин юлташ 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмахне вĕренни. Занятисем активлăн иртеççĕ. Руководитель коммунист-учитель М. Димитриев юлташ кашни ыйтăва сӳтсе явнă хыççăн кам мĕнле ăнланни çинчен ыйтса пĕлет. Вĕренекенсем хăйсем те нумай ыйтусем параççĕ.

Парторганизаци секретарĕ Я. Львов юлташ Сталин юлташăн сăмахĕсене приказĕсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе «Венера», «Новая сила», «Победа» колхозсенче пилĕк калаçу иртерчĕ. Вăл колхозниксене Совет халăхне нимĕç захватчикĕсене хирĕç тухса пыракан вăрçă çинчен каларакан, тĕрĕслесе вăрçă пулни çинчен тĕплĕн ăнлантарса парать. Çакăн хыççăн «Новая сила» колхозри тăватăмĕш бригада (бригадирĕ Н. Лукин), малтанхи вăхăтра уборкăра кая юла пынăскер, лайăх ĕçлеме тытăнчĕ, уборкăна ĕç малтан вĕçлесе колхозри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава илчĕ.

Çакăн пек çитĕнӳсем тума колхозниксене агитаторсем пулăшнă. Львов юлташ колхозниксене Сталин юлташăн сăмахĕсене ăнлантарса парса чухне колхозри стахановецсен ĕçĕсем тата колхозниксен фронта вăйлă пулăшса тăни çинчен каласа панă.

Коммунист Димитриев юлташ докладсене иртерме яланах тĕплĕн хатĕрленет, конспект тăвать. Август уйăхĕнче вăл тĕнчери лару-тăру çинчен 4 колхозра 3 хутчен доклад туса панă. Сталин юлташăн приказĕсене колхозниксене тĕплĕн ăнлантарать.

Коммунист Л. Захаров юлташ ферма работникĕсем хушшинче ĕçлет. Вăл ферма работникĕсене Сталин юлташăн вăрçă вăхăтĕнчи сăмахĕсене, приказĕсене ăнлантарса парать. Çапла ĕçленипе ферма выльăхсем шутне ӳстерсе пычĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана 160 процент пурнăçларĕ. Вăтесене пурне те хĕле хатĕрлесе çитерчĕ.

Коммунист Я. Васильев колхозсенче стена хаçачĕ кăларас ĕçе лайăх йĕркелесе пырать. Çав вăхăтрах вăл «Два года отечественной войны советского народа» темăпа икĕ доклад иртерчĕ.

Хĕрлĕ Çар фронтсенче çĕнтерӳсем туса пынине халăхалла, колхозниксем Хĕрлĕ Çар бойцĕсене валли 60 мăшăр чăлха, 50 мăшăр ытла перчатка çыхса пачĕç.

Коммунистсен пархатарлă ĕçне, вĕсем малта пынине ялсоветри кашни колхозра курма пулать. «Победа» колхоз членĕ коммунист М. Кагарин машинăпа кулленех 5—6 гектар тырă вырнă. [illegible] вăл ăна юсаса панă. Коммунистка Семенова юлташ ачасен яслинче ĕçлет. [illegible] колхозниксене Сталин юлташăн приказĕсене тĕплĕн ăнлантарса парать. Ферма заведующийĕ коммунистка Филиппова пушă вăхăтсенче тырă вырма тухнă. «Победа» колхоз çуртпурсене кĕске вăхăтра вырса пĕтерчĕ, государствăна тырă тăратмалли плана ытлашшипех пурнăçласа [illegible].

С. ШАДИН.

Ĕçчен комсомолецсем

ШАХАСАН. (Телефонпа). Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре—колхоз çамрăкĕсем малта пыраççĕ. Комсомола вăрман Енĕш колхозĕнчи пуçламăш организаци çак ĕçе лайăх йĕркеленĕ.

Организацире 8 комсомолец. Вĕсем пурте хирти ĕçсене активлăн хутшăнаççĕ. ВЛКСМ организаци секретарĕ Петров тата ытти комсомолецсем пур ĕçре те лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ. Ольга Григорьева, Елена Николаева комсомолкăсем çурлапа вырса, нормăна кулленех 120—150 процент тултарса пычĕç.

Çавăн пекех ытти комсомолецсем те уборкăн ответлă участокĕсенче ĕçлеççĕ. Михайлова комсомолка-бригадир. Унăн бригади пур ĕçре те малта пырать. [illegible] Надежда Николаева [illegible] 150 процент тултараççĕ.

О. ВИНОГРАДОВА.

Республика уйхирĕсенче

Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн!

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем тырăсене вырса пĕтерчĕç

СЕНТЕРВАРРИ, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнер районри пур колхозсем те тырă вырса пĕтерчĕç. Колхозсен уйхирĕсенчен пухса кĕртмелли вăрлăхлăх клевер тата çĕрулмипе пахча-çимĕçсем çеç юлчĕç.

Фронтпа тăван çĕршыва куллен пысăк пулăшу парса тăрас шухăшкăмăлпа ĕçленипе районри чылай колхозсенче кăçал уборка ĕçĕсем лайăх пулса пыраççĕ. Çанталăк чылай кансĕрлерĕ пулсан та, ĕç тухăçлăхĕ пысăк пулчĕ. «Наркомюст» колхоз ĕçе июлĕн 28-мĕшĕнче тытăнса, августăн 19-мĕшĕнче мĕнпур тырра вырса пухрĕ. 157,3 гектар тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртрĕ.

Малта пыракан колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен тыррине вырса пĕтернĕ хыççăнах кӳршĕри колхозсене социализмлă пулăшу пама кайрĕç. Çакă уборка ĕçĕсене пур колхозсенче те ăнăçлăн вĕçлеме май пачĕ. Августăн 31-мĕшĕ тĕлне район 10.360 гектар тырра пĕтĕмĕшпех вырса пĕтерчĕ.

Пирĕн колхозсем халĕ уйхирти пĕтĕм тыррăн 40,7 процентне капана хывнă, 24,3 процентне çапса пуçтарнă.

Августăн 31-мĕшĕ тĕлне район кĕраки планне 71,3 процент тултарчĕ. 7 колхозра кĕраки туса пĕтернĕ. Ольтиккасси ялсоветне кĕрекен пур колхозсем те кĕракине лайăх тата районра пуринчен малтан туса пĕтерчĕç. Ялсовет исполкомĕн председателĕ Матвеев юлташ ĕçе конкретно ертсе пычĕ.

Августăн 31-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем государствăна 1943 çулта тырă памалли плана 44 процент ытла пурнăçланă. Малта пыракан «Красная Армия» колхоз, ыран паянах авăн çапса пĕтерсе, уборка ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçлет.

С. ЖЕЛЕЗКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Пур йышши культурăсене те вырса пухнă

КӲКЕÇ, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Шупашкар районĕнчи колхозсем ĕнер, августăн 27-мĕшĕнче, пур йышши культурăсене те вырса пĕтерчĕç. 17.200 гектар тырра вырса пĕтерсе, çĕмелсене хывнă, 6.025 гектар тырра капана хывнă, 3.996 гектар тырра çапса пуçтарнă.

Кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ

ЕТĔРНЕ, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Таганрог, Ельня, Севск, Глухов, Рыльск хулисене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнине колхозниксем ялхуçалăхĕнчи чылай ĕçсене вĕçленипе палăртрĕç. Ĕнер Буденный ячĕпе тăракан колхоз уйхиртен юлашки кĕлтесене çыхса пуçтарса кĕртрĕ. Нормăпа кунне 350 кĕлте çыхмалла пулсан, Макарова, Охтерова, Иванова, Рыбакова колхозницăсем кулленех 700-шер кĕлте çыхса пычĕç. Кĕлте турттаракансем Воробьевпа Макарова юлташсем кунĕн-çĕрĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç, уйхиртен кĕлте кӳрсе пĕтерчĕç. Уйран кĕртнĕ кĕлтесене К. Иванов юлташ капана хывса тăчĕ. Халĕ ĕнтĕ Буденный ячĕпе тăракан колхозăн уйхирĕнче çĕмел пачах çук. Мĕнпур тырра йăлтах капана хывнă.

Кĕракине те колхоз ĕнер вĕçлерĕ.

Халĕ колхозниксем авăн çапаççĕ. Чылай колхозниксем кунта та пысăк тухăçпа ĕçлеççĕ. Чатыкова, Маргарейкина, Соколова юлташсем кашни икшер çыншăн ĕçлеççĕ.

Буденный ячĕпе тăракан колхоз государство умĕнчи 1943 çулхи обязательствăсене пурне те пĕтĕмĕшпех парса татрĕ. Паян колхоз хатĕрлев пунктне татах 7 центнер аш-какай леçрĕ, 1944 çулшăн аванс пачĕ.

—Хĕрлĕ Çара эпир колхозра хастарлăн ĕçленипе, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татнипе салют паратпăр,—тет колхоз председателĕ красногвардеец пулнă Гаврил Маргарейкин.

А. КРАСНОВ,
С. ЗАХАРОВ.

Пучах пухас ĕçе хакламаççĕ

ШАХАСАН, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Районри хăшпĕр колхозсенче тырпулсене пухса кĕртнĕ чухне пулакан тăккаланчăксене пĕтерес тĕлĕшпе пачах пăçителĕксĕр ĕçлеççĕ. «Красный пахарь» колхозра тулă вырнă çĕрте кашни тăваткал метр çинче 40—43 пучах выртса юлать. ВКП(б) Обком секретарĕ Белков юлташ пучахсене пухас пирки кăтартусем парса хăварчĕ. Апла пулин те колхоз председателĕ Григорьев юлташ вăл ĕçе организацилемен-ха. Ямашри «Ударник» колхозра (председателĕ Филиппов юлташ) тăккаланчăксем чылай пулнă. Унта та пучахсене пухмаççĕ.

«III интернационал» колхозра вырнă участоксене кĕтӳ кĕртсе янă. Унта вара кашни тăваткăл метрта 60—65 пучах сая янă.

КĔСКЕН

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Çавал Çырмари «Новое хозяйство» колхоз государствăна 1943 çулшăн аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм памалли плана çĕр процентчĕпех тултарчĕ.

«Новая сила» колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарчĕ. Планран ирттерсе 18 пăру, 10 путек, 5 хур туянчĕ.

ШАХАСАН. Шĕкĕрти «Акатуй» колхоз уйри тырпула вырса пĕтерчĕ. Государствăна тырă памалли плана та çак кунсенчех пурнăçлать. Уйхир ĕçĕсенче уйрăмăнах А. Иванова, Ф. Васильева, О. Павлова, Н. Леонтьева колхозницăсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем кулленхи нормăна 200 процента яхăн пурнăçласа пычĕç.

Вĕренӳ çулĕн малтанхи кунĕ

Шупашкарта

Хулари пур шкулсем те çĕнĕ вĕренӳ çулне организованно пуçăнчĕç. Занятисем пур классенче те йĕркеллĕ иртрĕç. Учительсем пурте хăйсен вырăнĕсенче. Малтанхи кун шкула заявлени парайман çамрăксем те чылай пынă. Шкул директорĕсемпе заведующийĕсем вĕсене те, ытти ачасем пекех, ăшă кăмăлпа йышăнса илчĕç.

Кăçал хулара пуçламĕш хут арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăммăн вĕрентме пуçланă. Арçын ачасене вĕрентмелли 1-мĕшпе II-мĕш тата хĕрачасене вĕрентмелли II-мĕш шкулсенче занятисем ăнăçлăн пуçланчĕç.

* * *

Чăваш ачисене вĕрентекен тулли мар вăтам шкулăн таса та çутă класĕсем паян ачасене ăшшăн кĕтсе илчĕç. Анфиса Никитична Волкова юлташ ку шкулта—çĕнĕ директор. Вăл ĕçлеме пуçлаччен—7 кун каярах—кунта шкул çуртне юсама та тытăнманччĕ. Волкова юлташ çав йывăрлăхсенчен хăраса ӳкмен, хăюллăн ĕçе тытăннă. Шкулти мĕнпур вăя вĕренӳ çулне хăвăртрах хатĕрленсе çитме мобилизациленĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех платник тупса, шкул çуртне, партăсемпе кăмакасене юсанă, классене штукатурка тунă, шуратса тирпейленĕ.

6-мĕш класра вĕренекен Геннадий Атласов 4 шкаф юсанă. Пионеркăсем Нина Вишнякова, Нюра Андреева, Люся Димитриева, Лида Хлебникова учительсемпе пĕрле партăсемпе классене çуса тасатнă, шкула çулпуçсен портречĕсемпе илемлетнĕ. Паян вĕсем шкула пуçламĕш хут килнĕ ачасене классене вырнаçтарма учительсене пулăшрĕç. Пионер дружини боевой листокăн 1-мĕш номерне кăларчĕ.

Шкул ачисем каникул вăхăтĕнче 2.000 килограмм ытла эмел курăкĕсем пухнă. 4-мĕш класра вĕренекен Иван Смирнов хăй пĕччен 480 килограмм, Галина Крышек 70 килограмм, М. Петрова—60 килограмм пухнă.

Учительсем каникул вăхăтĕнче вутă хатĕрлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕ. Шкул хăй вăйĕпех хĕл каçмалăх вутă хатĕрленĕ.

Шăп 9 сехет. 1-мĕш класа вĕренме килнĕ 20 ача пурте таса та çутă класа кĕрсе вырнаçрĕç. Хăйсене хăюсăррăн тытакан ачасемпе А. Магуськина учительница ăшшăн калаçу пуçарчĕ. Вăл вĕсене шкул пурнăçĕпе паллаштарчĕ, шкулта тата шкул тулашĕнче харпăрхăйне мĕнле тытмалли, кĕнекесене мĕнле усрамалли çинчен вĕрентрĕ.

Иккĕмĕш урокра ачасен хăюллăхĕ самаях ӳсрĕ. «Октябрь ачисем» ятлă сăвва хăшпĕр ачасем шкула киличченех вĕреннĕ пулас, çавăнпа ушкăнпа вĕреннĕ чухне кашниех хăйĕн пултарулăхне палăртма тăрăшни сисĕнчĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

Шупашкар районĕнче

I—IV-мĕш классенче вĕренӳ пуçланчĕ. Шĕмшер (директорĕ коммунистка М. Петрова), Шуçкасси (шкул заведующийĕ Егорова), Абаш шкулĕсене ачасем çĕр процентчĕпех пынă. Хыркассинчи шкулăн иккĕмĕш класĕнче вĕренекен Леонид Васильев çеç чирлĕ пирки вĕренме пырайман, ыттисем пурте занятисене вăхăтра çитнĕ.

Районра 40 шкул. Вĕсем пурте çĕнĕ вĕренӳ çулне начар мар хатĕрленнĕ. Пур шкулсем валли те учительсем çителĕклех. Вĕренӳ çулĕн малтанхи кунĕнчен пуçласах чылай шкулсенче вĕренекенсене вĕри апат çитерме пуçланă. Çĕнъялти тулли мар вăтам шкул ачасене уйрăмах лайăх кĕтсе илчĕ.

М. МИХАЙЛОВ.

Вăрмар районĕнче

Районри шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне пурте тенĕ пекех тимлĕн хатĕрленнĕ. Шкул çуртĕсене тата вĕренӳ оборудованийĕсене юсас, вутă хатĕрлесе турттарас ĕçсене учительсемпе аслă классенче вĕренекенсем хăйсен вăйĕпе тунă.

Шкулсенчен вĕренӳ çулĕ организованно пуçланни çинчен пĕлтереççĕ. Çĕнĕ Кинчерти тата Тупахри тулли мар вăтам шкулсене вĕренме тивĕçлĕ ачасем пурте занятисене вăхăтра çитнĕ. Тупах шкулĕнче (директорĕ Т. Иванова юлташ) малтанхи кунах ачасемпе учительсене вĕри апат çитернĕ. Ку шкул вĕренӳ çулне вăхăтра хатĕрленсе çитнĕ. Класс пӳлĕмĕсене, партăсемпе сĕтел-пукансене, доскасене сăрланă, шкул çуртне учительсемпе вĕренекенсем çуса тасатнă.

Район центрĕнчи вăтам шкулăн кĕçĕн классенче 71 ача вĕренмелле. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче 69 ача вĕренме пынă. Пĕрремĕш класра 20 ача вĕренмелле. Вĕсем пурте шкула пынă. Класс руководителĕ Е. Петрова юлташ малтанхи урокра ачасемпе ăшă кăмăллăн калаçса илчĕ, вĕсене шкулти йĕркепе паллаштарчĕ.

Çавăн пекех Арапуçĕнчи туллимар вăтам шкул та вĕренӳ çулне йĕркеллĕн пуçăнчĕ.

И. СТЕПАНОВ,
А. ЕРГАЧЕВА.

Октябрьски районра

Занятисем пур шкулсенче те вăхăтра пуçланчĕç. Анчах малтанхи кун чылай шкулсенче шкула пыман ачасем те пулчĕç. Урхас Кушăкри туллимар вăтам шкула 23, Октябрьскинчи вăтам шкула 6 ача, Çатракассинчи шкула 10 ача пыман.

Районри хăшпĕр шкулсенче учительсем çитмеççĕ. Апла пулин те райçутĕç пайĕпе райсовет исполкомĕ урăх ĕçсенче ĕçлекен учительсене, хăйсен специальноçĕпе ĕçлеме тавăрас пирки тивĕçлĕ мерăсем йышăнман.

Малтанхи кун палăрнă ситменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле.

Ачасем лагерьте аван каннă

Пионерсен Сĕнтĕрвăрринчи лагерĕнче икĕ сменăра фронтовиксен 60 ачи укçа тӳлемесĕр каннă.

Лагерьте воспитани ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Ачасене тĕнчери лару-тăру çинчен каласа панă отечественнăй Аслă вăрçă фрончĕсенчи тата Совет çĕршывĕнчи хыпарсене пĕлтерсе тăнă. Унта ачасен пултарулăхне ӳстерме пулăшакан нумай тĕрлĕ кружоксем ĕçленĕ.

Пушă вăхăтра ачасем кăмпа, шăлан çырли пухнă.

Хĕрарăмсем ертсе пырас ĕçсенче

Арçынсем фронта тухса кайсан, вĕсен вырăнне хĕрарăмсем тăчĕç. Сталин юлташ тылри мĕнпур ĕçе фронт интересĕсемшĕн туса пыма чĕннине ответлесе, вĕсем ĕçри хăвăртлăха ӳстерчĕç.

Хĕрарăмсем халь ответлă ĕçсене ертсе пыраççĕ. Колхоз председателĕсем пулса районра 10 хĕрарăм, ялсовет председателĕ пулса — 15, ферма заведующийĕсем пулса—65, финагентсем пулса—24 хĕрарăм ĕçлеççĕ. Çавăн пекех районра колхоз счетоводĕсемпе ялсовет секретарĕсем, вулав çурчĕсен заведующийĕсем пулса сахал мар хĕрарăмсем ĕçлеççĕ.

22 çулхи хĕрача Анна Бочкова иккĕмĕш çул Вырăс Сурăм ялсовет исполкомĕн председателĕнче ĕçлет. Ку ĕçе суйлаччен вăл колхозра рядовой колхозница пулнă. Бочкова юлташ, çамрăк пулин те, хăйне шанса панă ĕçе лайăх пурнăçласа пырать. Ку ялсоветри колхозсем кăçал çуракине ăнăçлăн вĕçленĕ. Уйрăмăнах Самушкинăри Совет Союзĕн Геройĕ М. Ефимов ячĕпе тăракан колхоза палăртмалла. Ку колхоз ытти çулсенче юлса пынă. Кăçал вăл пур ĕçсенче те лайăх тĕслĕхсем кăтартать.

Вырăс Сурăм ялсовечĕ государство умĕнчи обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пырать. Финанс планне квартăлтан квартăла ирттерсе тултарать, военнăй налог укçине пĕтĕмпех пухса пĕтернĕ. Ялсоветри «Доброволец» колхоз 1943 çулшăн сĕт-çу, çăмарта памалли обязательствăсене ытлашшипех тултарнă.

Ехремкасси ялсовет исполкомĕн председателĕ коммунист А. Димитриева юлташ ĕççыннисем хушшинче пысăк авторитетпа усă курать. Малтанхи вăхăтра вăл ялсовет исполкомĕн секретарĕ пулса ĕçленĕ. Иртнĕ çулти октябрь уйăхĕнче председатель пулса ĕçлеме тытăннă. Çак кĕске вăхăт хушшинчех вăл ялсоветра çирĕп актив пухрĕ. Унпа тачăн çыхăнса ĕçленипе ялсовет хăй умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Ялсоветри «Труд», «1-ое мая», Буденный ячĕпе тăракан колхозсем кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ ĕçлеççĕ. Колхозниксем хушшинче агитациллĕ ĕçе куллен туса пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе ялсоветри агитколлектив тăрăшса ĕçлет.

Ехремкасси ялсоветĕнчи колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçласа пыраççĕ. «Труд» колхоз 1943 çулшăн çĕрулми парса татрĕ, тĕштырă памалли обязательствăна та çитес кунсенчех пурнăçлать. «1-ое мая» колхоз сĕт памалли обязательствăна ăнăçлăн пурнăçларĕ.

Ку ялсовет финанс планне тултарас тĕлĕшпе районра малта пыракансенчен пĕри шутланать: Иртнĕ çулти плана вăл 127 процент тултарнă, кăçал та пĕрремĕш çурçул планне 15 кун малтан тултарчĕ, чаплах виççĕмĕш квартăлта пухмалли укçа-тенке те пухса пĕтерет. Финагент Е. Кузнецова юлташ тăрăшса ĕçлет.

Районри финагентсенчен комсомолка Н. Владимирова (Юськасси ялсовечĕ), комсомолка Е. Яндубанова (Яргунькино), Е. Никифорова (Крымзарайка) начар мар ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ялсоветĕнчи ĕççыннисем хушшинче ăнлантаруллă ĕçе лайăх туса пынипе финанс планне кашни квартăлтах ирттерсе тултараççĕ. Укçа-тенкĕ пухас ĕçре лайăх пример кăтартнăшăн Юськасси ялсовечĕ ВКП(б) райкомĕн райисполкомăн куçса çӳрекен хĕрлĕ ялавне илчĕ.

Колхоз председателĕсенчен уйрăмăнах Ксения Григорьевăна палăртмалла. Вăл Пиçенерти Чапаев ячĕпе тăракан колхоза ертсе пырать. Григорьева юлташ пултаруллăн ертсе пынипе, колхоз кĕске вăхăт хушшинчех лайăх ĕçлекен пулчĕ. Государство умĕнчи пур обязательствăсене те парса татнă.

Юлашки вăхăтра хĕрарăмсене шкул директорĕсемпе заведующийĕсем тата вулав çурчĕсен заведующийĕсем пулса ĕçлеме те сахал мар уйăрса лартнă. Вĕсем хăйсен ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пыма тăрăшаççĕ. Элĕкри вăтам шкулта Алексеева юлташ ертсе пырать. Иртнĕ çул хăшпĕр йывăрлăхсем пулчĕç пулин те, унăн шкулĕ вĕренӳ çулне япăх мар результатсемпе вĕçлерĕ, вĕренӳ çулне тимлĕн хатĕрленчĕ, 400 кубометр ытла вутă хатĕрлерĕ, партăсене юсарĕ.

ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕнче халиччен хĕрарăмсем сахалччĕ, халĕ çурри ытла хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Райисполкомăн çутĕç, сывлăх сыхлав, соцобеспечени отделĕсене хĕрарăмсем ертсе пыраççĕ, çĕрĕç пайĕнче пурте тенĕ пекех хĕрарăмсем ĕçлеççĕ.

Кăçал эпир ертсе пырас ĕçсене 100 хĕрарăма ытла уйăрса лартнă. Анчах çапах та çителĕклĕ теме çук-ха. Пирĕн ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме пултаракан хĕрарăмсем татах пур. Вĕсене ертсе пыракан вырăнсене уйăрса лартасси, пулăшу парасси – пирĕн тĕп задачăсенчен пĕри пулать.

М. КРАСИЛЬНИКОВ.
ВКП(б) Элĕк райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер Англи самолечĕсем тăшманăн Францири тата Çурçĕр-хĕвеланăç Германири чугун çулĕсене тата тинĕс-çар объекчĕсене тапăннă. Нумай паровозпа баржăна сиенленĕ.

Халь паллă пулса тăнă тăрăх, Америка авиацийĕ августăн 17-мĕшĕнче Регенсбургпа Швейнфурта тапăннă чухне нимĕçсен 307 истребительне пĕтерсе тăкнă.

Вăтаçĕр тинĕсре союзниксен авиацийĕ Италипе Сардинне пыра-пыра тапăннă. Çавăн чухне тăшманăн 28 самолетне персе ӳкернĕ.

Союзниксен авиацийĕ пыра-пыра тапăннине пула Кăнтăр Италире пур чугун çулсем те пăсăлнă.

МАНТБЭТТЕН ЛОРДА СОЮЗНИКСЕН КĂНТĂР ХĔВЕЛТУХĂÇ АЗИРИ ÇАРĔСЕН ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИЙĔ ВЫРĂННЕ ЛАРТНĂ

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Квебекри канашлура союзниксен Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири çарĕсене ертсе пыракан уйрăм командовани тума йышăннă. Верховный главнокомандующи пулма унта Маунтбэттен лорда лартнă. (ТАСС).

СУД

Колхоз тыррине вăрланăшăн ответ тыттарнă

Çак кунсенче Шăхасан районĕнчи халăх сучĕ Ямаш ялне кайса Пратта Кассинчи М. Маркова, У. Харитонова тата Т. Яковлева ĕçĕсене пăхса тухрĕ.

М. Маркова иртнĕ çулта та колхоз ферминчен тырă вăрланăшăн судпа айăпланнă пулнă. Анчах вăл çакăн хыççăн та вăрлас йăлана пăрахман. Колхоз анкартинче авăн çапнă чухне Маркова, Харитонова тата Яковлева колхозницăсем кĕсьене пăрçа тултарса килĕсене илсе кайнă. Çапла майпа кĕске вăхăт хушшинчех Маркова—30 килограмм, Харитонова—32 килограмм, Яковлева—12 килограмм тăран пăрçа вăрланă. Çак ĕç паллă ан пултăр тесе, Марковăпа Яковлева колхозран 8 килограмм пăрçа çыртарса илнĕ.

Халăх сучĕ преступниксен ĕçĕсене пăхса тухса, М. Марковăна икĕ çуллăха, Харитоновăна çулталăк та улта уйăх хушши тĕрмере хупса лартмалла турĕ. Яковлевăна 12 уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермелле туса, ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕнчен 25 процентне татса юлмалла тунă.

Пĕлтерӳ

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур. 6) докладчиксемпе беседчиксем валли инструкциллĕ доклад пулать.

Доклад теми:
«Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен кунĕ».
Докладчик Рассудов юлташ.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 30-мĕшĕнчен пуçласа куннеренех кинохроникăн ятарласа тунă

„ХАЛĂХ ПРИГОВОРĔ“

ятлă кăларăмне кăтартать.

Ку кинохроникăра „Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем Краснодар хулипе Краснодар крайĕн территорийĕ çинче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем пирки пулса иртнĕ суд процесне“ кăтартнă.

Кинохроника хыççăн

„69-АЯ ПАРАЛЛЕЛЬ“

ятлă илемлĕ фильм кăтартаççĕ.

Сеанссем çак вăхăтра пулаççĕ: 10, 12, 14, 6, 18, 20, 22 тата 24 сехетре.

Ирхине 9 сехетрен пуçласа кăнтăрла 22 сехете çитиччен коллективсен заявкисене йышăнаççĕ.

ШУПАШКАРТИ ПИР-АВĂР ФАБРИКИН ОРС-не çакăн пек работниксем кирлĕ: суту-илӳпе хатĕрлӳ секторĕн начальникĕ, план секторĕн начальникĕ, хатĕрлӳ инспекторĕ, делопроизводитель-машинистка, курьер-уборщица, агентсем, рабочисем, кладовщиксем, уборщица.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Володарский урамĕ, Пичет çурчĕ, Шупашкарти пир-авăр фабрикин ОРС-ĕ.
3—

Ялхуçалăх банкĕн Чăваш конторине Ялхуçалăх банкĕн Çĕмĕрле хулинчи пункчĕн уполномоченнăйĕ пулса ĕçлеме работник кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, Госбанк çурчĕ.

Шупашкарти добровольнăй пожарнăй обществăн трупасем тасатас тĕлĕшпе ĕçлекен бюроне трупа тасатакансем васкавлă кирлĕ. Арçынсене те, хĕрарăмсене те илеççĕ.

Ĕçукçине ĕçленĕ тăрăх тӳлеççĕ. Супăнь параççĕ. Столовăйра апат çитереççĕ. Хваттер параççĕ. Пĕччен пурăнакансем валли общежити пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Хĕрлĕ площадь, 33, Шупашкарти добровольнăй пожарнăй общество.
2—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Н 1822 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.